ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ТӲЛЕВСЕР ПРАВО ПУЛĂШĂВĔ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КЕРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи пуш уйăхĕн 28-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинчи тӳлевсĕр право пулăшăвĕ çинчен" 2012 çулхи пуш уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 20 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2012, 3 №; 2013, 10 №; 2014, 5, 12 №-сем; 2016, 4, 6 №-сем; 2017, 2 №; "Республика" хаçат, 2018, нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕ; 2020, пуш уйăхĕн 11-мĕшĕ; 2021, нарăс уйăхĕн 25-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 27-мĕшĕ; 2022, чӳк уйăхĕн 9-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2023, ака уйăхĕн 26-мĕшĕ, утă уйăхĕн 19-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 13-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 2 статьян 2-мĕш пайĕн 3-мĕш пунктĕнче "патшалăхăн тӳлевсĕр право пулăшăвĕпе тивĕçтерекен тытăмĕн" сăмахсене "патшалăхăн тата патшалăхăн мар тӳлевсĕр право пулăшăвĕпе тивĕçтерекен тытăмĕсен" сăмахсемпе улăштарас;

2) 3 статьян 1-мĕш пайне çакăн пек çырса 1^1-мĕш пункт хушса хурас:

"1^1) Чăваш Республикинче Этем прависемпе ĕçлекен уполномоченнăй;";

3) 4 статьяра:

а) статья ятне ", Чăваш Республикинче Этем прависемпе ĕçлекен уполномоченнăй" сăмахсем хушса хурас;

ă) çакăн пек çырса 8-мĕш пай хушса хурас:

"8. Чăваш Республикинче Этем прависемпе ĕçлекен уполномоченнăй тӳлевсĕр право пулăшăвне пама хăйĕн компетенцийĕн шайĕнче пулăшать.";

4) 5 статьян 2-мĕш пайĕн 2-мĕш пунктне çакăн пек çырса "е" тата "ĕ" çум пунктсем хушса хурас:

"е) çак Саккунăн 6 статйин 8^{13}-мĕш тата 8^{14}-мĕш пункчĕсенче кăтартнă çынсен шутĕнчи (вĕсен çемйисен членĕсемсĕр пуçне) гражданина хыпарсăр çухалнă тесе йышăнасси çинчен;

ĕ) çак Саккунăн 6 статйин 8^{13}-мĕш тата 8^{14}-мĕш пункчĕсенче кăтартнă çынсен шутĕнчи (вĕсен çемйисен членĕсемсĕр пуçне) гражданина вилнĕ тесе пĕлтересси çинчен;";

5) 6 статьян 8^{14}-мĕш пунктне "Раççей Федерацийĕн Хĕç-пăшаллă Вăйĕсем" сăмахсем хыççăн "е Раççей Федерацийĕн наци гвардийĕн çарĕсем" сăмахсем хушса хурас;

6) 10 статьяра "тата право пулăшăвне тӳлевсĕр паракан ытти субъектсене" сăмахсене кăларса пăрахас;

7) 11 статьяра:

а) 1-мĕш пайра:

пĕрремĕш абзаца "должноçри çынсем" сăмахсем хыççăн ", Чăваш Республикинче Этем прависемпе ĕçлекен уполномоченнăй" сăмахсем хушса хурас;

çакăн пек çырса 7-мĕш пункт хушса хурас:

"7) гражданселе тӳлевсĕр право пулăшăвĕ парассипе çыхăннă ытти сведенисене.";

ă) 2-мĕш пая çакăн пек çырса хурас:

"2. Патшалăхăн тӳлевсĕр право пулăшăвĕпе тивĕçтерекен тытăмĕн ĕçне хутшăнакансем шутланакан адвокатсем çак статьян 1-мĕш пайĕн 1-мĕш, 2-мĕш тата 6-мĕш пункчĕсемпе пăхса хăварнă ыйтусем тăрăх халăха право тĕлĕшĕнчен пĕлтерсе тăрас тата право тĕлĕшĕнчен пĕлӳ парас ĕçсене пурнăçлаççĕ.".

2 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи пушăвăйăхĕн 29-мĕшĕ
15 №